

# Критикăлла шухăшлав технологийĕн мелĕсем

*Чи кирли- çынна шухăшлама вĕрентни.*

*Бертольд Брехт*

Критикăлла шухăшлав- ăс-тăн ĕçĕн пĕр енĕ, çын ăнлавне, пĕтĕмлетĕвне, шухăшлавне палăртать.

**Шухăшлав ĕçĕн виçе тапхăрĕ:**

- **1.шыраВ ĕçне явăçтарни**
- **2.ăнланса илни**
- **3.пĕтĕмлетÿ туни**



Эйзин (Дмитриев) Петр Егорович 1943 çулхи августăн 1-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Энехмет ялĕнче çуралса ӳснĕ. Педуниверситетăн историпе филологи факультетĕнче пĕлӳ илнĕ. Учительте ĕçленĕ. Çарта пулнă. 1968 çултанпа кĕнеке издательствинче вăй хурать. Вăл редакциленипе чылай паха кĕнеке пичетленсе тухать. Хăй те сахал мар çырать. Вăл чăваш поэзийĕнче верлибр (ирĕклĕ сăвă) аталантарма тăрăшать. Унăн «Кăвайт», «Сар хĕвел», «Çĕмĕрт çути», «Юлашки çил-тăман» кĕнекисем уйрăмах илĕртӳллĕ. «Юлашки çил-тăман» кĕнекере 151 сăвă пичетленнĕ.

# Малаллине палăртни.

**Панă сăмахсемпе тата сăмах майлашăвĕсемпе усă курса_сăввăн пулас сюжетне йĕркелетпĕр:**

**Ват йăмра…**
**Хурăн…**
**Ача-пăча алхасса( выляса)…**
**Кăçал йăмрана…**
**Инкек-синкек( нуша, айăп)…**
**Илемĕ пĕтрĕ…**
**Ларать…**
**Йăмра хӳтлĕхĕнче…**

*Çын çынпа пурăнать.*
*Ваттисен сăмахĕ*

# «Йăмрапа хурăн» сăвă

## Виçĕ енлĕ дневника тултарасси

| Мĕн пĕлнĕ? | Мĕн пĕлтĕм? | Мĕн пĕлесшĕн? |
| --- | --- | --- |
| Йăмра- вăрăм çулçăллă, хурăн-вĕтĕ çулçăллă. Иккĕшĕ те пирĕн тăрăхра ÿсеççĕ. Йăмра хунавпа каять, хурăн- вăрăпа е хунавпа. | ? | ? |

# Чарăнса тăрса вулани

1.Ват йăмрапа çап-çамрăк хурăн пурнатчĕç юнашар.
Йăмри-лутра, курпун, хурăнĕ- йăрăс, илĕртӳллĕ, сар пикене ас илтеретчĕ вăл.

**Пĕрремĕш пайне вуласа тухсан таблица тултаратпăр**

| Йăмра | Хурăн |
|---|---|
| | |
| | |
| | |
| | |

**2.Ача-пăча, иртен-çӳрен е алхасса,**
**е ахальтен хурăн çине пăхса савăннă май**
**ялан кӳрентеретчĕç йăмрана.**
**Хурăн çине  ал  çĕклеме никам та хăяймастчĕ.**
**Кăçал тавралăх илемне ярать тесе,**
**касрĕç йăмрана.**

-**Йăмрана каснă хыççăн хурăнпа мĕн пулма пултарнă?**

3.Вара мĕнпур инкек-синкек
хурăн çине тиенчĕ.
Пĕри
ун хуппине вистенĕ, тепри
шывне юхтарнă.
Кĕçех илемĕ пĕтрĕ йывăçăн.
Ларать вăл халь пуçне усса
ытла та хурлăхлăн,
ватă йăмра хÿтлĕхĕнчи
ыр вăхăта аса илсе.

-Ватă йăмрапа çамрăк хурăна пурнăçра камсемпе танлаштарма тăрăшнă? Чунра вĕсем мĕнле шухăш-туйăм çуратрĕç?

# Пĕтĕмлетӳ туни





**Киле ĕç.** ***<u>Сăвăпа усă курса ăслав çырасси:</u>***
***<u>«Ватă çын- çамрăк çын»</u>***